28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
АВГУСТ
15
ЮНКУН
157(6908) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Халăха кирлĕ таварсене ытларах та лайăхрах туса кăларар!

Ĕççыннисен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатасси, вĕсем валли куллен кирлĕ таварсем ытларах туса кăларасси çине пирĕн партипе правительство яланах тимлĕн çавăрăнса пăхаççĕ. Отечественнăй вăрçăн йывăр вăхăчĕсенче те партипе правительство ĕççыннисен нушисене тивĕçтерес тĕлĕшпе, Хĕрлĕ Çара мĕн кирлине ытлăн-çитлĕн туса парас тĕлĕшпе ĕçленĕ пекех, куллен ĕçлесе пычĕç. Партипе правительство ĕççыннисен нушисемшĕн питех те тăрăшни — нимĕç захватчикĕсем аркатнă вырăнсенчи халăх хуçалăхĕ хăвăрт ура çине тăрса, ĕççыннисен пурнăçĕ юсанса пынинчен те лайăх курăнать.

Пурнăçра тăтăшах кирлĕ таварсене туса кăларса, ĕççыннисен кулленхи нушисене тивĕçтерес тĕлĕшпе пуринчен ытларах пирĕн вырăнти промышленноçпа промысла кооперацийĕ ĕçлеме тивĕçлĕ. Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче вăл промышленноçсем, шултăра промышленность пекех, фронта кирлĕ продукцие туса кăларас тĕлĕшпе ытларах ĕçлерĕç. Халĕ, Отечественнăй вăрçă пирĕн çĕнтерӳпе вĕçленнĕ хыççăн, вырăнти тата кооперации промышленноçĕсем кирлĕ пурнăçра яланах кирлĕ пулакан таварсем туса кăларма тивĕçлĕ.

Çак задачăна пурнăçа кĕртес тесе, пирĕн государство вырăнти промышленноçа укса-тенкĕ енĕпе пысăк пулăшу парать. Союзлă республикăсен халăх хуçалăхĕ валли укса-тенкĕ тăкаклассине кăçалхи бюджетра иртнĕ çулхи бюджетринчен 48,4 процент чухлĕ ытларах пăхнă. Пирĕн республикăри промышленноçа малалла аталантарма та укса-тенкĕ сахал мар каять. Чăваш АССР Верховный Совечĕн IX-мĕш Сессийĕ республикăн çак çулхи бюджетĕнчен 6208,8 пин тенкĕ промышленность валли тăкаклама çирĕплетрĕ.

Партипе правительство промышленность интересĕсемшĕн çавăн пек тăрăшаççĕ пулин те, пирĕн республикăри вырăнти промышленность хăйĕн задачисене начар пурнăçласа пырать-ха. Унăн чылай предприятийĕсем продукци туса кăлармалли плана уйăхран уйăха тултарса пымаççĕ. Социализмлă ăмăрту итогĕсем тăрăх, Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне темиçе уйăх хушши ĕнтĕ пĕр промкомбинат та илме тивĕçлĕ пулмарĕ. Ĕççыннисем валли куллен кирлĕ таварсем туса кăларас тĕлĕшпе вара промкомбинатсем уйрăмăнах начар ĕçлеççĕ. Сăмахран, Улатăртипе Çĕмĕрлери комбинатсен июнь уйăхĕнче 300-шер мăшăр йĕлтĕр туса кăлармалла пулнă. Анчах вĕсем июнь уйăхĕнче çак ĕçе пачах та тытăнман. Промкомбинатсем хуçалăхра чи кирлĕ япаласене — сĕтел-пукан, катка-пичке, чаçăк-тирĕк, вĕрен-пăявсем тата ытти те — питех те сахал туса кăлараççĕ. Июнь уйăхĕнче катка-пичке тумалли задание 13 процент кăна пурнăçа кĕртнĕ. Вырăнти промышленность çак çулăн малтанхи çур çулĕнче ĕççыннисем валли куллен кирлĕ таварсем туса кăлармалли плана, пĕтĕмĕшпе илсен, 42,7 процент çеç тултарнă.

Республикăри промысла кооперацийĕ те куллен кирлĕ япаласем туса кăларас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлет. Промкооперации иртнĕ çур çулта çак ĕçĕн планне 86,6 процент пурнăçа кĕртнĕ. Пирĕн промкомбинатсемпе промартельсен ĕçĕнчи тепĕр пысăк çитменлĕх вăл—плана ассортимент тăрăх тултарманни пулать. Тĕслĕхрен, промысла кооперации артелĕсем çак çулăн малтанхи ултă уйăхĕнче 69 изделирен 14 изделие кăна плана пăхнă чухлĕ туса кăларнă. Ытти 55 изделие плана пăхнинчен чылай сахалтарах туса кăларнă.

Юлашки вăхăтра уйрăмах инвалидсен кооперации артелĕсем хăйсен ĕçне начарлатрĕç. Вĕсем июль уйăхĕнче куллен кирлĕ таварсем туса кăлармалли плана 80 процент çеç тултарнă. Инвалидсен 24 артелĕнчен 20 артелĕ июль уйăхĕнчи плана тултарман. Инвалидсен артелĕсем пурте пекех начар ĕçлеме пуçлани Коопинсоюз руководителĕсем иртнĕ вăхăтри хăшпĕр çитĕнӳсемпе лăпланса ларнинчен килет.

Мирлĕ вăхăтра вырăнти промышленность умне лартнă задачăсем ĕççыннисен яланхи нушисене тивĕçтерес ĕçре пулакан çавăн пек çитменлĕхсене тĕпренех пĕтерме хушаççĕ. Вăрçă вăхăтĕнче манăçа хăварнă промыслăсене тепĕр хут ĕçе кĕртес пулать. Иртнĕ çулсенче пирĕн республикăри алăстаççене илемлĕ тĕрĕсем тума пултарнăшăн мухтатчĕç. Чăваш хĕрĕсен çак чаплă ĕçне каллех анлăн тытăнас пулать. Çавăн пекех сĕтел-пукан, катка-пичке тăвас, çатансем çыхас, смола юхтарас тата ытти ĕçсене чĕртсе яма пултаратпăр. Вăл япаласене туса кăларма пирĕн чĕртавар çителĕклĕ. Çак ĕçе ертсе пыракансен тата производствăра ĕçлекенсен пуçарулăхĕ кăна кирлĕ.

Партин XVIII-мĕш съезчĕ строительствăра тăтăшах кирлĕ пулакан материалсене— кирпĕч, известь, тимĕр пăта тата ытти те—кашни республикăпа облаçрех çителĕклĕ таран туса кăларма май пур тата туса хатĕрлемелле те, тесе кăтарса хăварчĕ. Çак кăтарту уйрăмах халĕ, нимĕç фашисчĕсем аркатнă вырăнсенчи халăх хуçалăхне ура çине тăратнă вăхăтра пысăк вырăн йышăнса тăрать. Республикăри стройматериал предприятийĕсен ĕçне тĕпренех лайăхлатмасăр, кирпĕч, черепица, известь, тимĕр пăта тата ыттисене те ытларах туса кăлармасăр, çуртйĕр строительстви ĕçне кирлĕ пек туса пыма çук. Пирĕн республикăра строительство материалĕсене çителĕксĕр туса кăларнă пирки çуртйĕрсене лартас тата юсас ĕç юлса пыни паллă ĕнтĕ.

Пĕтĕм Совет Союзĕнче аслă Çĕнтерӳ ячĕпе социализмлă ăмăрту сарăлса пырать. Паллах, халăха кирлĕ таварсем туса кăларас тĕлĕшпе ĕçлекенсем те çак хăватлă ăмăрту тулашĕнче юлмĕç. Мускав хулинчи промкооперации работникĕсем, çавăн пекех вырăнти промышленноçăн «Газоаппарат» ятлă завочĕ, Москворецкри пир-авăр фабрикин тата Йывăç касакалакан 1-мĕш номерлĕ заводăн коллективĕсем, ăмăртăва хутшăнса, мĕнпур Совет Союзĕнчи вырăнти промышленность тата промкооперации работникĕсене халăха кирлĕ таварсем ытларах туса кăларма чĕнсе каларĕç.

Çак чĕнӳ çине ответлесе, пирĕн республикăри хăшпĕр промартель коллективĕсем Çĕнтерӳ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç. Шупашкарти Куйбышев ячĕпе тăракан артель, ăмăртăва хутшăнса, çулталасри производство планне икĕ уйăх малтан тултарма, планран иртерсе ĕççыннисем валли куллен кирлĕ таварсем 100 пин тенкĕлĕх туса кăларма пулнă. Шупашкарти «Пекарь» артельре ĕçлекенсем ĕç тухăçлăхне планпа пăхнинчен 12 процент ытларах ӳстерме, таварăн хăйне ларакан хакне иртнĕ çулхинчен 2,5 процент чухлĕ чакарма, пĕрремĕш сортлă продукци 25 процентран кая мар туса кăларма обязательство илнĕ.

Социализмлă ăмăрту—пысăк вăй. Вăл продукци ытларах туса кăларма кăна мар, унăн хакне йӳнетме, пахалăхне лайăхлатма пулăшмалла. Вырăнти промышленность предприятийĕсемпе промкооперации артелĕсем мĕнле ĕçленине вĕсем плана иртнĕ çулсенчи улшăнми хак тăрăх тултарнипе мар, кашни тавара плана пăхнă чухлĕ тата лайăх туса кăларнипе хакламалла. Пирĕн промкомбинатсемпе артельсем туса кăларнă таварсем магазинсенче сутăнмасăр ан выртчăр, вĕсене ĕççыннисем кăмăлласа туянччăр!

Çĕнтерӳ ячĕпе пыракан Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура ĕççыннисем вырăнти промышленность работникĕсенчен нумайрах та лайăхрах таварсем туса кăларасса кĕтеççĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 14-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 14-мĕшĕнче Инçетри Хĕвелтухăçĕнче совет çарĕсем малалла наступлени туса пынă.

ИНÇЕТРИ ХĔВЕЛТУХĂÇĔНЧИ 1-мĕш ФРОНТ çарĕсем ПОГРАНИЧНАЯ—ХАРБИН чугун çулĕ тăрăх наступлени туса пырса, МУДАНЬЦЗЯН шывĕ урлă каçнă та хаяррăн çапăçнă хыççăн МУДАНЬЦЗЯН хулипе пысăк чугун çул узелне туртса илнĕ, çавăн пекех тата САНЬДАОГАН, БЭЙТЯНЬЦЗЫ, ЧЭНЦЗЫ ЦИЧЖАНСИГОУ ялĕсене йышăннă.

ИНÇЕТРИ ХĔВЕЛТУХĂÇĔНЧИ 2-мĕш ФРОНТ çарĕсем СУНГАРИ шывĕн икĕ çыранĕ тăрăх та наступлени туса пырса, 40—50 километр малалла куçнă, СИНШАНЬЧЖЭНЬ хулипе чугун çул станцине тата ЦЗИСЯНЬЧЖЭНЬ, ФАНБАОЧЖЭНЬ, ВОФУГАН ялĕсене çапăçса туртса илнĕ.

САХАЛИН утравĕ çинче фронт çарĕсем тăшманăн чикĕри тĕреклетнĕ ярăмне татнă та кăнтăр еннелле 15—20 километр малалла куçнă.

БАЙКАЛ ЛЕШ ЕНЧИ ФРОНТ ÇАРĔСЕМ ПЫСĂК ХИНГАНРАН хĕвелтухăç еннелле малалла наступлени туса пырса, ТАОНАНЬ хулипе пысăк чугун çул станцине çапăçса туртса илнĕ, çавăн пекех тата ЛИНЬСИ, ДАБАНЬШАН, ЛУБЭЙ, ЧЖАНЬЮЙ, ТУЦЮАНЬ, ГЭГЭНЬМЯО хулисене йышăннă, пĕр кун хушшинче 100—150 километр малалла кайнă.

Лăпкă океанри флотăн карапĕсемпе чаçĕсем Корейăри СЕЙСИН портне çапăçса туртса илнĕ.

Августăн 9-мĕшĕпе 13-мĕшĕ хушшинчи çапăçусем вăхăтĕнче пирĕн çарсем Инçетри Хĕвелтухăçĕнче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 8 пин çын ытла тыткăна илнĕ.

Пирĕн авиаци Маньчжурири чугун çул узелĕсене тата японецсен Çурçĕр Корейăри порчĕсене пыра-пыра çапнă.

СОВИНФОРМБЮРО.

ЯПОНИ ПĔР СĂМАХСĂР ПАРĂННИ

Августăн 14-мĕшĕнче Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительстви Швейцари правительстви урлă Япони правительствинчен çакăн пек пĕлтерӳ илнĕ:

«Япони правительстви августăн 10-мĕшĕнче Потсдамри Декларацин условийĕсене йышăнас ыйту çинчен янă нота пирки тата Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Великобританин, Совет Союзĕ тата Китай Правительствисен Америкăн государство секретарĕ Бирнс августăн 11-мĕшĕнче янă отвечĕ пирки Япони правительстви тăватă державăн правительствисене çакна пĕлтерет:

«1. Унăн Величестви Император Потсдамри Декларацин условийĕсене Япони йышăнасси çинчен Императорăн рескриптне кăларнă.

2. Унăн Величестви Император Потсдамри Декларацин положенийĕсене пурнăçа кĕртме кирлĕ условисене хăйĕн Правительствипе Императорăн Генеральнăй штаб-хваттерне алă пустарма хатĕр. Унăн Величестви çавăн пекех тата Японин мĕнпур çар, тинĕс çар, авиаци влаçĕсене тата хăйне пăхăнса тăракан мĕнпур хĕçпăшаллă вăйсене, вĕсем кирек ăçта пулсан та, вăрçă ĕçне чарма тата хăйсен хĕçпăшалне пама приказ кăларма хатĕр, çавнашкалах тата Союзниксен Хĕçпăшаллă Вăйĕсен Верховный Командующийĕ маларах асăннă условисене пурнăçа кĕртес тесе хушма пултаракан ытти приказсене те кăларма хатĕр».

Совет Союзĕпе Китай республики хушшинче Мускавра пулса иртнĕ калаçусем çинчен

КОММЮНИКЕ

Генералиссимус И. В. Сталин Берлинри Конференцирен таврăннă хыççăн Китай республикин премьер-министрĕ Сун Цзинвей господин Китай республикин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕпе Ван Шу-цзе господинпа пĕрле Мускава килнĕ те Генералиссимус И. В. Сталинпа тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕпе В. М. Молотовпа Совет Союзĕпе Китай республики хушшинчи çыхăнусем çинчен тепĕр хут калаçу пуçласа янă.

Августăн 14-мĕшĕнче Совет Союзĕпе Китай республики хушшинчи туслăхпа союз çинчен тунă Договора алă пуснă, çавăн пекех тата икĕ çĕршыва интереслентерекен ытти пур ыйтусем тĕлĕшпе те пĕтĕмпех калаçса татăлса килĕшӳ тунă.

Договора та çавăн пекех ытти килĕшӳсене те çывăх вăхăтрах, вĕсене Совет Союзĕпе Китай республики çирĕплетнĕ хыççăнах, пичетлесе кăлараççĕ.

ВЦСПС-ра

УЙРĂМ ТАТА УШКĂНЛĂ ПАХЧАСЕНЧИ ПАХЧАÇИМĔÇЕ ПУХСА КĔРТЕС УМĔН

ВЦСПС секретариачĕ рабочисемпе служащисен уйрăм тата ушкăнлă пахчисенчен 1945 çулта пахчаçимĕç пухса кĕртесси çинчен постановлени йышăннă.

Рабочисемпе служащисене, çар çыннисен çемьисемпе Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене уйрăм тата ушкăнлă пахчасенче пахчаçимĕç туса илес ĕçе хутшăнтарас тĕлĕшпе профсоюз организацийĕсем чылай пысăк ĕç тунă. Вĕсем çĕрулмипе пахчаçимĕç вăрлăхĕсем, калчасем тупма пулăшас тĕлĕшпе ĕçленĕ, Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене чи лайăх участоксене уйăрса панă. Çав ĕçсене тунине пула, 1945 çулта малтанлăха палăртса хунă тăрăх рабочисемпе служащисем—18 миллион çын ытла пахчаçимĕç туса илессĕ, вĕсем пахчаçимĕç лартса хăварнă çĕр лаптăкĕ пĕр миллион çурă гектара яхăн шутланать.

ВЦСПС секретариачĕ профсоюз организацийĕсемпе пахча комиссийĕсене пахчаçимĕçе пухас, турттарса кĕртес тата сыхласа усрас ĕçре рабочисемпе служащисене, малтан çар çыннисен çемьисемпе Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене тимлĕн пулăшма хушнă.

Пахча-çимĕç лартса тăвакан çынсене овощехранилищĕсем тата нӳхрепсем тума пулăшмалла, предприятисен администрацийĕсемпе пахчаçимĕç пухма тата турттарма корзинăсемпе пĕчĕк урапасем туса хатĕрлес тĕлĕшпе калаçса татăлмалла.

Профорганизацисене уйрăм тата ушкăнлă пахчасене çирĕп хураллас, пахчаçимĕçе таптаттармалла мар тата вăрламалла мар тăвас ĕçе йĕркелеме хушнă. Пахчаçимĕç пиçнĕ вăхăтра тата ăна пухса кĕнĕ вăхăтра яланхи хуралçăсемсĕр пуçне дежурнăйсем уйăрса памалла.

Пахчаçимĕç пухса кĕртнĕ хыççăн предприятисемпе учрежденисенче пахча комиссийĕсен отчечĕсене итлемелле. Çав вăхăт тĕлне пахчаçимĕç лартса тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен çынсен çитĕнĕвĕсене кăтартас шутпа выставкăсем организацилеме хушнă. Çав выставкăсем пысăк тухăçлă пахчаçимĕç туса илнине кăтартса памалла.

Профсоюзсен фабрикăсемпе заводсенчи тата вырăнсенчи комитечĕсемпе пахча комиссийĕсен рабочисемпе служащисене 1946 çул валли çĕрулми тата ытти тĕрлĕ пахчаçимĕç вăрлăхĕсене хатĕрлеме пулăшмалла. 1946 çулта вăрлăх туса илме халех хĕрлĕ кăшман, кишĕр, сухан хатĕрлесе хумалла.

Профсоюзсен Центральный Комитечĕсене ноябрĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр ВЦСПС-а уйрăм тата ушкăнлă пахчасенче пысăк тухăçлă пахчаçимĕç туса илнĕшĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялав тата грамотăсемпе премисем пама кандидатсене тăратма хушнă. (ТАСС).

Кок-сагыз хатĕрлекенсен республикăри канашлăвĕ

Çак кунсенче Шупашкарта кок-сагыз хатĕрлекенсен тата агроном-каучуководсен республикăри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу республикăра кок-сагыз вăрлăхне тата тымарне хатĕрлес ĕç мĕнле пыни çинчен сӳтсе-яврĕ. Çак ыйтупа Чăваш республикинчи «Расткаучук» кантурĕн управляющийĕ Ефимов юлташ доклад туса пачĕ. Вăл хăйĕн докладĕнче кок-сагыз вăрлăхне пухас ĕç колхозсенче çителĕксĕр пынине палăртрĕ. Паянхи кун тĕлне пĕтĕмпе 3390 килограмм кăна пухнă, плана пурĕ те 23 процента яхăн кăна тултарнă. Вăрлăх пухас енĕпе Шăхасан, Канаш, Вăрмар тата ытти хăшпĕр районсем малта пыраççĕ, Первомайски, Комсомольски, Чкаловски, Çĕрпӳ, Тăвай, Красноармейски районсем юлса пыраççĕ. Çак районсенче икĕ çул ӳсекен кок-сагыз плантацийĕсем пур. Анчах та кунти колхозсем кок-сагыз вăрлăхне пухма питĕ кая юлса тытăнчĕç. Вăрмар районĕ вăрлăх пухмалли плана 42 процент, Шăхасан районĕ 62 процент, Канаш районĕ 55 процент тултарнă.

Августăн 1-мĕшĕнче кок-сагыз тымарне кăларас ĕç пуçланчĕ. Пурĕ 324 центнер пухса плана 35 процент тултарнă.

Канашлура Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн каучук туса илес тĕлĕшпе ĕçлекен отделĕн начальникĕ Соколов юлташ, Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн главнăй агрономĕ Беляев юлташ тухса каларĕç. Вĕсем кок-сагыз вăрлăхĕпе тымарне хатĕрлесси çинчен тата кок-сагыз кĕркунне акса хăварасси çинчен чарăнса тăчĕç. Çавăн пекех Шадиряков (Чкаловское), Николаев (Красноармейское), Прокопьев (Канаш), Менялов (Первомайское), Перьев (Комсомольское) юлташсем тухса каларĕç.

Канашлу август уйăхĕнче кок-сагыз вăрлăхне тата тымарне пухса пĕтермелли конкретлăй мероприятисем палăртрĕ.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин патĕнче арми генералĕ Дуайт Д. Эйзенхауэр ячĕпе пулса иртнĕ апатлану

Августăн 13-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ Генералиссимус И. В. Сталин патĕнче Кремльте арми генералĕ Дуайт Д. Эйзенхауэр ячĕпе апатлану пулса иртнĕ.

Апатланура çаксем пулнă: арми генералĕ Д. Эйзенхауэр, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Совет Союзĕнчи посолĕ В. А. Гарриман господин, Союзниксен репараци комиссийĕнчи США представителĕ Поули господин, генерал-лейтенант Люшьес Д. Клей, генерал-майор Джон Р. Дин, контр-адмирал Майклз, бригаднăй генерал Томас Д. Дэвис тата Эйзенхауэр генерал ывăлĕ—лейтенант Джон С. Эйзенхауэр.

Советсем енчен çак юлташсем пулнă: В. М. Молотов, К. Е Ворошилов, Л. М. Каганович, А. И. Микоян, Л. П. Берия, Г. М. Маленков, Н. А. Вознесенский, маршал Г. К. Жуков, маршал С. М. Буденный, Н. А. Булганин, А. Я. Вышинский, В. Л. Ванников, А. И. Шахурин, Д. С. Устинов, артиллерин главнăй маршалĕ Н. Н. Воронов, арми генералĕ А. И. Антонов, артиллери маршалĕ Н. Д. Яковлев, авиаци маршалĕ Ф. Я. Фалалеев, авиаци маршалĕ Ф. А. Астахов, авиаци маршалĕ Г. А. Ворожейкин, бронетанковăй çарсен маршалĕ Я. Н. Федоренко, инженери çарĕсен маршалĕ М. П. Воробьев, çыхăну çарĕсен маршалĕ И. Т. Пересыпкин, арми генералĕ А. В. Хрулев, адмирал Л. М. Галлер, адмирал С. Г. Кучеров, генерал-полковниксем Ф. И. Голиков, Ф. Ф. Кузнецов, С. М. Штеменко, И. В. Смородинов, генерал-лейтенант Н. В. Славин, генерал-майор М. П. Кутузов.

Апатлану ăшшăн та туслăн пулса иртнĕ.

РЕМЕСЛА ТАТА ЧУГУН ÇУЛ УЧИЛИЩИСЕНЧЕ ВĔРЕНЕКЕНСЕН ÇУЛЛАХИ КАНĂВĔ

Ремесла тата чугун çул училищисенче августăн 1-мĕшĕнчен çуллахи пĕр уйăхлăх каникул пуçланнă. ВЦСПС секретариачĕ профорганизацисене арçынсемпе хĕрачасем валли клубсенче, садсемпе парксенче вечерсем, массăллă канусем, художествăллă пултарулăх концерчĕсем, экскурсисем, спектакльсемпе киносеанссем организацилеме хушнă. Стадионсенче, физкультура залĕсемпе вĕренекенсен общежитийĕсенче спорт ăмăртăвĕсем, çарпа физкультура вăййисем туса ирттерме хушнă.

Сывлăх хавшанă арçынсемпе хĕрачасене кану çурчĕсемпе санаторисене яраççĕ. (ТАСС).

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăваш АССР-ĕнчи колхозниксемпе колхозницăсене, ялхуçалăх, промышленность, культура тата искусство работникĕсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

Малалли. Пуçламăшĕ «Чăваш Коммунин» 135, 138, 141, 142, 145, 146, 147 тата 154-мĕш номерĕнче.

ШУПАШКАР ХУЛИ ТĂРĂХ:

127. Александр Валерьянович Плетнева—ялхуçалăх выльăх-чĕрлĕх физиологи кафедрин заведующине, Чăвашсен ялхуçалăх институчĕн биологи наукисен кандидатне.
128. Михаил Алексеевич Полетаева—Чăваш АССР прокуратурин старши следователне.
129. Александр Никитич Полякова — Чăвашсен ялхуçалăх институчĕн кафедра заведующине.
130. Евдокия Прокопьевна Прокопьевăна—Госбанкăн хулари кантурĕн управляющине.
131. Иван Федорович Пустовойтова — Чăвашсен государство академи театрĕн актерне.
132. Руффа Александровна Российскаяна—пир-авăр фабрикинчи мастер помощникне.
133. Екатерина Александровна Рыжковăна—заводри работницăна.
134. Иван Андреевич Рыжова—ялхуçалăх выльăх-чĕрлĕх тăрантармалли кафедра заведующине, Чăвашсен ялхуçалăх институчĕн ялхуçалăх наукисен кандидатне.
135. Александр Николаевич Рябчикова.
136. Вениамин Пантелеевич Савенкăна — заводри техник-технолога.
137. Анастасия Николаевна Савичевăна—табак фабрикинчи табак типĕтекене.
138. Илья Дмитриевич Светлова — ВКП(б) Центральный Комитечĕ çумĕнчи Парти Контроль Комиссийĕн Чăваш АССР-ĕнчи Уполномоченнăйĕн контролерне.
139. Зоя Павловна Селивановăна — Чăваш Радиокомитечĕн солисткине.
140. Андрей Иванович Семенова—заводри слесаре.
141. Михаил Семенович Семенова — Госбанкăн Чăваш АССР-ĕнчи Управляющин заместительне.
142. Павел Яковлевич Семячкина — Горвоенкоматăн запасри лейтенантне.
143. Дария Сергеевна Сергеевăна — тир-сăран комбинатĕнчи работницăна.
144. Кузьма Сергеевич Сергеева—Радиокомитетăн главнăй редакторне.
145. Клавдия Семеновна Сидоровăна — заводри рамщицăна.
146. Федор Сергеевич Сизова—тарасасем юсакан заводри тимĕрçе.
147. Дарья Алексеевна Сикстеле—Чăвашсен ялхуçалăх институчĕн ботаника кафедрин старши преподавательницине.
148. Мухамед Закирович Ситдикова — «Заготживсырьен» республикăри кантурĕн план пайĕн начальникне.
149. Иван Андреевич Скрынника—заводри цех начальникне.
150. Анна Петровна Смирновăна — пир-авăр фабрикинчи мастер помощникне.
151. Василий Иванович Смирнова — Чăваш АССР Совнарком шоферне.
152. Николай Степанович Сниткина—Горпромкомбинатри жестянщике.
153. Алексей Николаевич Соколова — Чăваш АССР Совнаркомĕн топливо группин начальникне.
154. Екатерина Васильевна Соколовăна—ВКП(б) Обкомĕн старши машинисткине.
155. Иван Тимофеевич Соколова—Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн каучуклă ӳсентăрансен пайĕн начальникне.
156. Мария Васильевна Соколовăна — Чăвашсен ялхуçалăх институтĕнчи пуçламĕш парти организацин секретарьне.
157. Наталия Николаевна Соколовăна —Чăвашсен государство академи театрĕн актрисине.
158. Мария Никитична Сорокинăна — Чăвашсен юрăпа ташă государство ансамблĕн артисткине.
159. Алексей Сидорович Сотникова — Чăвашсен государство музыка училищин преподавательне.
160. Владимир Дмитриевич Спичкова—ВЛКСМ Обкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарьне.
161. Василий Васильевич Старостина — Чăваш АССР Наркомхоз Чăвашпроекчĕн старши инженерне.
162. Архип Степанович Степанова — ВКП(б) Обкомĕн кадрсен пайĕн ялхуçалăх тата хатĕрлев организацийĕсенчи кадрсем енĕпе ĕçлекен секторĕн заведующине.
163. Василий Степанович Степанова—заводри шофер-механика.
164. Федора Ивановна Степановăна — Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн информаципе статистика группин заведующине.
165. Петр Степанович Степанова — «Заготживсырье» кантурĕн управляющине.
166. Анастасия Алексеевна Столяровăна—заводри слесаре.
167. Анна Андреевна Столяровăна — СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Госпланăн Чăваш АССР-ĕнчи уполномоченнăйĕн статистика управленийĕн экономистне.
168. Анна Ивановна Столяровăна — ВКП(б) Обкомĕн канцеляри заведующине.
169. Елена Ивановна Стуриковăна — «Социализм» колхозри ĕне сăвакана.
170. Анатолий Аркадьевич Сукнине — заводри инженер-технолога.
171. Михаил Алексеевич Сурова.
172. Валентин Вячеславович Таврина —Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕн заместительне.
173. Ольга Николаевна Тавринăна — Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн вăрлăх контроль лабораторийĕн директорне.
174. Евгения Григорьевна Тарасовăна — Хула Совет исполком председателĕн заместительне.
175. Мария Никитична Тимофеевăна— Чăвашсен государство издательствин производство пайĕн начальникне.
176. Павел Тимофеевич Тимофеева — заводăн Пихтулински участок заведующине.
177. Степан Алексеевич Тренькова — ВКП(б) Обкомĕн шоферне.
178. Илья Семенович Тукташа—писателе.
179. Валентина Федотовна Уховăна — Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн награда панисене шута илес тата регистрацилес тĕлĕшпе ĕçлекен группа заведующине.
180. Александр Афанасьевич Федорова —Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн сорт управленийĕн начальникне.
181. Вениамин Федорович Федорова—заводри прессовщика.
182. Иван Федорович Федорова—заводри каменщика.
183. Алексей Архипович Федосеева — Чăвашсен юрăпа ташă государство ансамблĕн солистне.
184. Луиза Давыдовна Фейертака — радиокомитетăн концертмейстерне.
185. Мария Николаевна Филипповăна ВКП(б) Обкомĕн гараж диспетчерне.
186. Герман Сергеевич Филиппова — Чăваш АССР прокуратурин уголовнăй тата суд ĕç пайĕн начальникне.
187. Федор Иванович Фомкина—заводри металлурги цехĕн начальникне.
188. Иван Васильевич Хазова—спирт подвалĕн заведующине.
189. Зоя Петровна Хлебниковăна — Чăвашсен юрăпа ташă государство ансамблĕн солисткине.
190. Иван Петрович Хлебнова—«Союзутилĕн» Шупашкарти кантурĕн управляющине.
191. Петр Петрович Хузанкая—поэта.
192. Людмила Мироновна Цветковăна— хĕрачасен 1-мĕш вăтам шкулĕнчи комсомол организацин секретарьне.
193. Александр Александрович Цельмана—Атăл леш енчи торфопредприятин тяга начальникне.
194. Евгений Александрович Чернышевича—713-мĕш çулйĕр эксплоатаци участокĕн начальникне.
195. Павел Егорович Шайбина—Чăваш АССР прокуратурин следстви пайĕнчи прокурор помощникне.
196. Юлия Григорьевна Шарковăна — заводри слесарь-сборщицăна.
197. Александр Иванович Шепелева — Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн главнăй бухгалтерне.
198. Яков Нехамович Штрафуна—заводри инженер-конструктора.
199. Степан Антонович Шумкова (Шавлыне)—поэта.
200. Елизавета Сергеевна Якимовăна— СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Госпланăн Чăваш АССР-ĕнчи Уполномоченнăйĕн статистика управленийĕнчи снабжени тата потреблени нормин группинчи экономистне.
201. Любовь Андреевна Якунина — заводри шеф ĕçĕн руководительне.
202. Наталья Михайловна Ясновăна— 3056-мĕш номерлĕ эвакогоспитальри врач-ординатора.
203. Анна Сергеевна Яшуринăна— 11-мĕш номерлĕ ФЗО шкулĕнчи производство вĕрентĕвĕн мастерне.

ЧКАЛОВСКИ РАЙОН ТĂРĂХ:

1. Алнулла Алимовна Алимовăна—райсовет исполкомĕн мобилизаци пайĕн заведующине.
2. Иван Георгиевич Арланова—«РОКК» колхоз председательне.
3. Касим Закирович Валеева—МТС комбайнерне.
4. Павел Иванович Илюшина—«Красное Батырево» колхозри каучуководсен бригадирне.
5. Ольга Романовна Клементьевăна — Вăтаялĕнчи пуçламĕш шкул заведующине.
6. Петр Иванович Краснова—Осоавиахим райсовет председательне.
7. Гильбана Сариулловна Куликовăна—МТС трактористкине
8. Иван Александрович Ситова—МТС-ри 5-мĕш трактор бригадин бригадирне.
9. Нина Лаврентьевна Федоровăна — Патăрьелĕнчи педагогика училищинчи вĕренӳ пайĕн заведующине.
10. Елизавета Ивановна Федоскинăна— çыхăну кантурĕнчи старши телеграфисткăна.

(Малалли пулать).

Тырпул—Тăван çĕршыв вăйхăвачĕ

Ӑвăна хăвăртрах çапар, государствăна тырă срокчен парса татар!

Çурхи тулă выраççĕ

КУСЛАВККА, августăн 14-мĕшĕ. (Телефонпа). «Красный Курган» колхоз членĕсем СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн «1945 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленине сӳтсе-явнă хыççăн: ку пирĕн кулленхи ĕçĕн боевой программи пулса тăрать, тесе конкретнăй обязательствăсем илчĕç. Кĕрхи тырăсене 8 ĕç кунĕнче вырса пĕтерме тата çĕмеле хывма пулчĕç. Вĕсем хăйсен обязательствине чыслăн пурнăçларĕç. 7 ĕç кунĕнче выраш вырса пĕтерчĕç. Ĕнер кунта çурхи тулă вырма тытăнчĕç, ыран пăрса çулма тытăнаççĕ. Тырпул пухса кĕртес ĕçре колхозра лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлекенсем нумайланчĕç. Уйрăмăнах Отечественнăй вăрçă инвалидĕ Иванов юлташ ертсе пыракан бригада членĕсем лайăх ĕçлеççĕ. Нина Чаркина, Агафия Коробка, Евгения Батурина, Васса Комарова, Татьяна Балдина юлташсем тырă вырма тухнăранпах кулленхи нормăна 160—180-шар процент тултарса ĕçлеççĕ. Вĕсем кашни кунах çурлапа 0,16—0,18 гектар тырă выраççĕ. Çамрăксем те лайăх ĕçлеççĕ. Акă Лидия Батурина тата Елена Даманина кăçал малтанхи хут тырă вырма тухнă пулсан та 0,10 гектар вырăнне 0,15 гектар выраççĕ.

Колхоз ытти ĕçсене те вăхăтра туса пырать. Кунта виççĕмĕш кун ĕнтĕ авăн çапаççĕ. Государствăна кашни кунах 5—10 центнер çĕнĕ тырă леçеççĕ. Августăн 13-мĕшĕнче колхоз ыраш акма тухрĕ. Акасса вара пĕтĕмпех сеялкăпа акаççĕ. Уйхирте ĕçлекенсем кунне икĕ хутчен столовăйра апатланаççĕ.

«Динамо», «Правда» колхозсем те ыраш вырса пĕтерчĕç. Кунта та вырăнĕ-вырăнĕпе пулса çитнĕ тулла суйласа выраççĕ.

М. ОГОРОДНИКОВ.

Уйхирте хĕрӳллĕ ĕç пырать

ЧУРАЧĂК, августăн 14-мĕшĕ. (Телефонпа). Районра малта пыракан колхозсем «Гигант» (председателĕ Егоров юлташ), «Муравей» (председателĕ Никитин юлташ), «Правда» (председателĕ Корнилов юлташ) ыраш вырса пĕтерчĕç. Çак колхозсен çитĕнĕвĕ чи малтанах ĕçе пĕлсе организацилениинчен килнĕ. Кунта кашни колхозник хăйне уйăрса панă участокра пĕччен е пĕчĕк ушкăнпа ĕçленĕ. Çавна май ĕç тухăçлăхĕ те пысăк пулнă. Кашни колхозник нормăна ытлашшипех тултарса пынă. Çанталăк уяр тăнă вăхăтра туллин усă курас тесе, колхозниксем шурăмпуç çутипех ĕçе тухнă, тĕттĕм пулсан тин ĕçрен таврăннă. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра Елена Васильева кулленхи нормăна 200 процент, М. Ахтерова, О. Гаврилова колхозницăсем 150—170 процент тултараççĕ. «Ударник» колхоз членĕ Домна Дмитриева кашни кунах çурлапа 0,17—0,20 гектар вырать. «Герой» колхозра Х. Николаева тата Ф. Ильина юлташсем ăмăртса ĕçлеççĕ, çурлапа кашнинех 0,19 гектар выраççĕ.

Паянхи кун тĕлне районĕпе 4000 гектар ытла ыраш вырнă. Районри колхозсем кунсерен 600—700-шер гектар выраççĕ.

Нумай колхозсенче ыраш акаççĕ. Пурĕ 250 гектара яхăн акнă. «Шурăмпуç», «Пучах», Молотов ячĕпе тăракан колхозсенче уйрăмăнах ыраш акас ĕç ăнăçлă пырать.

Чылай колхозсем государствăна обязательство тăрăх тырă пама тытăнчĕç. «Гигант» колхоз 24 центнер, «Броневик» колхоз 25 центнер леçнĕ. «Правда» колхоз пилĕк кун хушшинче леçмелли плана 200 процент тултарнă. «Пучах», «Шурăмпуç», Молотов ячĕпе тăракан колхозсем çĕнĕ тырра çапса государствăна параççĕ.

Ф. РОМАНОВ.

Районри малта пыракан колхозсенче

МУРКАШ, августăн 13-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри пур колхозсенче те уйрах митингсемпе пухусем пулса иртеççĕ. Колхозниксем Совет правительстви ячĕпе Молотов юлташ тунă заявление ырлаççĕ. Инсетри Хĕвелтухăçĕнче çапăçакан Хĕрлĕ Çара пулăшас тесе, тырпул пухса кĕртес ĕçе вăхăтра тума обязательство йышăнаççĕ.

«Герой» колхоз ыраш вырма августăн 8-мĕшĕнче тухрĕ, колхозниксем августăн 15-мĕшĕччен ыраш вырса пĕтерме сăмах пачĕç. Çак кунсенче пулса иртнĕ пухура агитатор Бардасов юлташ, çапла каланă: «Малашне мирлĕ пурнăçпа пурăнас тесен, вăрçă вучахĕсене пурне те пĕтерсе тăкмалла. Япони империализмĕ тĕнчери иккĕмĕш империализмлă вăрçă пуçарса яракане пулса тăрать. Пирĕн çĕршывăн тата Хĕрлĕ Çарăн çак вăрçă вучахне пĕтерсе тăкмалла, вăл ăна пĕтерсе тăкĕ те».

Колхоз ыран ыраш вырса пĕтерет. Халĕ пĕрсех ыраш акаççĕ. Сумăрлă çанталăк авăн çапма кансĕрлет. Çавăнпа та колхозниксем кивĕ вăрлăх акма йышăннă. Кивĕ тырă акма çитмен пирки колхозниксем хăйсен тыррине параççĕ. Антонина Иванова колхозница акма 38 центнер ыраш панă. Ивановăн пахха пуçарăвне ырласа ытти колхозниксем те колхоза кĕтмелле тырă параççĕ.

«Броневик» колхоз членĕсем те хастарлă ĕçлеççĕ.

— Государствăна тырă вăхăтра пани, Япони агрессорне аркатса тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшни пулать,—тет колхоз председателĕ Г. Матвеев юлташ. Колхоз государствăна 1945 çулшăн ыраш парса татнă.

«Çвобода» колхоз членĕсем (председателĕ Яриков юлташ) августăн 15-мĕшĕнче ыраш вырса пĕтерме йышăннă.

— Августăн 22-мĕшĕ тĕлне ыраш акса пĕтерниппе, октябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парса татнипе хамăрăн Хĕрлĕ Çара пулăшăпăр,—теççĕ колхозниксем. Колхозăн 220 гектар ыраш вырса кĕртмелле, халĕ 100 гектар ытла вырнă. Ыран авăн çапма тытăнаççĕ. Çак кунсенчех çапнă ыраша типĕтсе государствăна пама тытăнаççĕ.

Колхозра массăллă-ăнлантарулла ĕçе те лайăх организациленĕ. Колхоз председателĕ Яриков, унăн заместителĕ Петровский тата учительница Маркова юлташсем яланах колхозниксем хушшинче. Япони агрессорне аркатса тăкас ятпа мĕнле ĕçлемелли çинчен колхозниксем хушшинче каласусем ирттереççĕ. Колхозра 6 бригада, ыраш вырма тухнăранпа кашни бригадăран 7 номер «боевой листок» кăларнă.

Халĕ кăнтăрла та, çĕрле те ыраш выраççĕ. Ыраш выраssипе Гуськова юлташ ертсе пыракан бригада малта пырать. Овчинникова, Мозеркина, Иванова колхозницăсем норма тăрăх 0,12 гектар вырас вырăнне, кашнинех 0,15 гектар выраççĕ.

Ф. МАЛЫШКИН.

Вăрлăхлăх клевера хăçан вырса пухмалла

Республикăри колхозсенче тырпул пухса кĕртес ĕç пуçланчĕ. Халĕ кашни кун кăна мар, кашни сехет питĕ хаклă. Тырпул пухса кĕртнĕ чухне ĕçе пĕлсе организацилени питĕ кирлĕ. Паллах, ĕçе организациленĕ чухне пĕчĕк ĕçсене манни е кая хăварни сиенлĕ. Час-часах вăрлăхлăх клевер пухассине кайран тумалли ĕç тесе шутлаççĕ.

Вăрлăхлăх клевера вăхăтра пухса илни калама çук кирлĕ. Иртнĕ çул Советски районри «Сеятель» колхоз (председателĕ Андреев юлташ) 6 гектар çинчен 27 центнер клевер вăрлăхĕ туса илчĕ. Вăрмар районĕнчи «Маяк» колхоз та (председателĕ А. Архипов юлташ) пурĕ 23 центнер клевер вăрлăхĕ хатĕрленĕ. Çак районри «Красные Мураты» колхоз (председателĕ Данилов юлташ) 3 гектар çинчен 15,72 центнер вăрлăх туса илнĕ. Клевер вăрлăхĕн пĕр центнерĕ 4 центнер тĕштырăпа танлашать. Çак тĕслĕхсем ĕнтĕ пирĕн колхозсем клевера вăхăтра пухса, çиййĕнчех типĕтсе, лайăх шĕкĕлчесен пысăк тупăш илме пултарнине çирĕплетсе параççĕ. Пусуçаврăнăшне çирĕп тытса пырасси, выльăх валли çителĕклĕ апат хатĕрлесси тата тăпрана азотлă удобрени парасси пĕтĕмпех клевер акнинчен килет.

Анчах та çак чăнлăха ăнланса илмен колхозсем те сахал мар-ха.

Иртнĕ çул Тăвай районĕнчи «Культура», «Коммунар» тата ытти нумай колхозсем вăрлăхлăх хăварнă клевера вăхăтра çулса илеймерĕç, шĕкĕлчессине вара декабрĕн 25-мĕшĕччен тăсрĕç. Çакăн пек тĕслĕхсем Элĕк, Етĕрне, Чкаловски тата ытти районсенче те пулчĕç. Шăмăршă районĕнчи Карабай Шăмăршăри Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз иртнĕ çул вăрлăх валли 20 гектар лайăх клевер хăварнăччĕ. Çак лаптăкран вăл сахалтан та 40 центнер клевер вăрлăхĕ (урăхла каласан, 160 центнер тĕштырă) пухса илме пултаратчĕ. Анчах та клевера вăхăтра пухман пирки çак тырпул колхоз амбарне кĕмерĕ.

Кăçал çакăн пек тĕслĕхсем пачах пулмалла мар. Клевера пухса шĕкĕлчесси çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла.

Клевера пухма акнă лаптăкри чечеклĕ пучахсем çуррине яхăн хăмăрлансан тытăнмалла. Чечеке ларасси пĕр харăс пулмасан, виçĕ пайĕнчен пĕр пайĕ хăмăрлансан та пухма юрать. Клевера пухма вăхăт çитнине пĕлес тесен, çапла тумалла. Кашни лаптăкрах пĕр пек вырăнсенчен икĕ площадка суйласа илмелле, вĕсем пĕр-пĕринчен чылай аякра пулмалла. Палăртнă площадкăран пĕрер тăваткал метр виççе илсе, унти клеверăн пĕр пучахне те çухатмасăр вырса илмелле. Вырса илнĕ клеверăн пучахĕсем ан тăккаланччăр тесе, ăна миххе хурсан авăн.

Шутлама тытăнсан малтан пĕр кĕлтин пучахĕсене пĕтĕмпех татса илмелле, унтан вара вĕсене суйлама тытăнмалла тата çакăн пек уйрăмăн хурса пымалла:

1. Пулса иртсе кайнисем, ванса тăракансем.
2. Тĕксĕм-хăмăррисем (вĕсем пулса иртнĕ, анчах ванмаççĕ).
3. Пулса çитнĕ хăмăр пучахсем (вăррисем çирĕп лараççĕ).
4. Шупка-хăмăр пучахсем (вăрă чашкисем симĕсрех).
5. Симĕс пучахлисем (вăррийĕ пулса çитмен).
6. Чечекри тата чечеке ларман пучахсем.

Кашни ушкăнрах миçе пучах пуррине уйрăмăн шутласа хут çине çырас пулать. Унтан шутланă кĕлтере миçе пучахне пĕлмелле. Кайран кашни ушкăнри пучахсем миçе процент йышăннине тупмалла. Кашни ушкăнри вăрлăхсен шутне пĕлсен, клевера хăçан вырмалли вăхăта палăртма та пулать. Пулса иртсе кайнă пучахсем пухнă чухне тăкăнса пĕтнине пула вăрлăх параймаççĕ, чечекри тата чечеке ларайманнисенчен те вăрлăх пулмасть, çавăнпа та вăтам ушкăнрисем миçе процент йышăннине шутласа, пухса илмелли вăхăта палăртмалла.

Пĕр ушкăнран тепĕр ушкăна клевер пучахĕсем уяр çанталăкра 5 кунра, çумăрлă, сивĕ çанталăкра 7—8 кунра куçаççĕ. Вăрлăхсем тĕксĕм-хăмăр тата хăмăр пучахсенче ытларах пулсан, клевера халех вырса пухма тытăнмалла. Вăрлăхсем хăмăр тата симĕс-хăмăр пучахсенче ытларах пулсан, сăнаса пăхнă хыççăн 5—7 кунтан вырмалла. Симĕс-хăмăр тата симĕс пучахсенче вăрлăхсем ытларах пулсан, 10—15 кунран тин вырса пухас пулать.

Çак анализа тума кашни колхозах районри агрономсем тата агроном-семеноводсем пулăшмалла. Вĕсем колхозри агротехниксене анализ мĕнле тумалли çинчен тĕплĕн ăнлантарса памалла.

Клевер пухас тĕлĕшпе агроном кăтартса панă срок çирĕп срок пулса тăрать, ăна никамăн та пăсмалла мар.

Вăхăтра пухмасăр тата шĕкĕлчемесĕр тăккаласа пĕтерни шĕн айăплисене çирĕп ответ тыттармалла.

Н. ПЕТРОВ,
Чăваш АССР Наркомземĕн Сорт Управленийĕн старши агрономĕ.

Выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлесси районра мĕншĕн юлса пырать?

Ишлей районĕ государствăна 1945 çулшăн выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парас ĕçре юлса пырать.

Уйрăмăн илсен, колхозниксемпе единоличник хуçалăхĕсем аш-какай памалли хăйсен обязательствисене 29 процент, сĕт-çу—37 процент, çăмарта—11 процент, çăм—35 процент çеç тултарнă.

Районри хăшпĕр ял Совечĕсемпе колхозсенче ку ĕç ытла та çителĕксĕр пырать. Сĕньял-Покровски ял Советĕнчи колхозниксемпе единоличниксен аш-какай 31,48 центнер памалла, вĕсем 5,34 центнер кăна панă. Сĕт 9520 литр памалла, 2175 литр çеç панă, çăм 167 килограмм памалла, 33 килограмм çеç панă.

Государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парас енĕпе район кая юлса пыни Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн районри уполномоченнăйĕ тата райпотребсоюз çителĕклĕ ĕçлеменнинчен килет. Хатĕрлев Комиссариачĕн районри уполномоченнăйĕн ял Совечĕсенче 10 агент пур. Çав агентсем хушшинче нимĕнле дисциплина та çук, вĕсен ĕçне Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн районри уполномоченнăйĕ П. Романов юлташ тĕрĕслемест. Чурачăк ял Советĕнчи агента Ф. Суворова 2 ял Совечĕ çумне çирĕплетнĕ. Ăна нихăçан та кунти ялсенче курма çук. Çавăнпа та ĕнтĕ Чурачăк ял Совечĕ чи кайри вырăнта тăрать.

Чантăр ял Советĕнчи колхозниксемпе единоличниксем аш-какай памалли плана 15 процент, сĕт памалли плана 52 процент, çăмарта памалли плана 10 процент, çăм памалли плана 30 процент тултарнă. Çак ял Советĕнче Хатĕрлев Комиссариачĕн районри уполномоченнăйĕн заместителĕ Е. Михайлова пĕрмаях уполномоченнăй пулса пурăнать, анчах хатĕрлев ĕçĕсем мĕнле пынипе интересленмест. Ку ял Советĕнчи колхозсен сĕт памалли плана тултарма пур условисем те çителĕклĕ.

Çăмарта пухас енĕпе райпотребсоюз ĕçлет. Çапах та Райсоюз председателĕ И. Горшков нимĕнле ответлăх та туймасть: ялсенчи лавкасенче ку тĕлĕшпе манăн 36 çын ĕçлет, тет вăл. Анчах вĕсем чылайĕшĕ ял хушшинче çăмарта пухма тухмаççĕ. Ишлейри лавкара ĕçлекен З. Кудряшова яла тухса пĕр çăмарта та пухман. Мамăшри лавкан 39.657 штук çăмарта пухмалла пулсан, вăл 915 çăмарта çеç пухнă. Райсоюз председателĕ Горшков юлташ ку ыйтупа ялти лавкасенче пĕринче те пулман.

Районра выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес ĕçре татăклă улшăну тумалла.

В. ГУСЬКОВ.

Çапăçури Çартан таврăннă воинсем ĕçе кĕреççĕ

ЙĔПРЕÇ. Çак кунсенче Çапăçури Çартан 11 фронтовик киле таврăнчĕ. Вĕсенчен чылайĕшĕн кăкăрне орденсемпе медальсем илемлетсе тăраççĕ. Акă Фруктов юлташ 2 хутчен «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕ тата «За отвагу» медаль илнĕ. Çавăн пекех Мамонтовпа Константинов юлташсене те Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче паттăррăн çапăçнăшăн правительство темиçе хутчен те медальсем парса наградăланă.

Районри ĕççыннисем паттăр воинсене савăнăçлăн кĕтсе илнĕ. Мамонтов юлташ хăй çуралса ӳснĕ «Тымар» колхоза таврăннă. Вăл вăрçăра пулнă хушăра колхоз ферма çурчĕ тата пахчаçимĕç хумалли подвал туса лартнă.

—Эпĕ, фронтра мĕнле кĕрешнĕ, колхозра та çавăн пекех тăрăшса ĕçлетĕп,—тенĕ Мамонтов юлташ колхозниксене.

Молотов ячĕпе тăракан колхоза таврăннă Константинов юлташ Йĕпреç МТС-не шофера кĕнĕ.

П. КУРАКОВ.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

ЛОНДОН, августăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви панă хыпарсем тăрăх, союзниксен Лăпкă океан çинчи типçĕр вăйĕсен командованийĕн штабĕ çапла пĕлтернĕ: союзниксен çарĕнчи авиаци самолечĕсем августăн 11-мĕшĕпе 12-мĕшĕнче Японири Кюсю утравĕ çине, Хонсю утравĕ çинчи Куре хули патĕнчи вăрçă объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă, Японин шыв айĕн çӳрекен пĕр киммине, 12 суту-илӳ суднине тата грузсем турттаракан икĕ суднăна шыва путарнă, Формоза утравĕ çинче чугун çул участокĕсене тата японецсен авиабазисене сиен кӳнĕ. Çавăн пекех тата самолетсем японецсен Шанхай çывăхĕнчи гаваньсенчи вăрçă объекчĕсене тата японецсен Корейăри Фузан районĕнчи сулйĕрĕсене атакăланă.

Австрали истребителĕсем Японин Борнео утравĕ çинчи вăрçă объекчĕсене атакăланă, 9 шхунăпа баржăна шыва путарнă.

ВАШИНГТОН, августăн 13-мĕшĕ, (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Лăпкă океан çинчи флочĕн штабĕ çапла пĕлтерет: американецсен 3-мĕш флочĕн тата Британи флочĕн авиацийĕ августăн 13-мĕшĕнче ирхине Токио районне атакăланă. Çав тапăну çаплах пырать. Тапăнăва 1000 пилот хутшăннă.

СОВЕТ ГРАЖДАНĔСЕНЕ ШВЕЙЦАРИРЕН ТАВĂРСА КИЛЕС ЫЙТУ ПИРКИ

ПАРИЖ, августăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Швейцарире пурăнакан совет гражданĕсен лару-тăрăвĕ пирки Швейцари правительстви кăларса тăратнă сĕнӳпе Совет Правительстви килĕшнине пурте пĕлеççĕ. Çакна пула, Швейцари влаçĕсем Швейцарире лекнĕ совет гражданĕсене япăх тыткалани çинчен калакан фактсене тĕрĕслеме тата сведенисем пухма, çав гражданĕсене каялла Тăван çĕршыва таврăс ĕçе йĕркелеме Швейцарие совет комиссийĕ кайнă пулнă. Июлĕн 27-мĕшĕнче çав комисси ĕçе тытăннă. Комисси членĕсем Швейцарин провинцири лагерĕсене тухса кайнă, унта вĕсем, лагерьсенче пурăнакан совет гражданĕсене тупса палăртса, вĕсене Тăван çĕршыва таврăс тĕлĕшпе хатĕрленӳ ĕçĕсене туса ирттереççĕ.

Швейцари влаçĕсем совет гражданĕсене япăх тыткалани çинчен калакан фактсене тĕпчеме халĕ те тытăнман-ха. Çак ĕçе Совет Союзĕ, Англи, США тата Франци представителĕсенчен тузă комисси тĕпчемелле. Ку ĕç, американецсен çар атташи Лег генерал каланă тăрăх, вăл хăйĕн правительствинчен тивĕçлĕ инструкци илмен пирки чарăнса тăрать. Акăлчансен çар атташине илес пулсан, вăл, хăй каланă тăрăх, инструкцисем илнĕ пулин те, хăйĕн американец-тусĕпе пĕрле кăна ĕçе тытăнма пултарать. Францин çар атташи Уавэ генерал кирек хăш вăхăтра та ĕçе тытăнма хатĕрри çинчен пĕлтернĕ.

Çакна та палăртса хăварас пулать: Швейцарире совет гражданĕсене япăх тыткалани çинчен калакан факта Швейцари хаçачĕсем хăйсем те июлĕн 30-мĕшĕнче палăртса хăварнă.

Грецири лару-тăру

АФИНЫ, августăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер коммунистсен партийĕн Центральный Комитечĕ Вулгарис правительстви туса ирттерме хатĕрленекен «суйлавсене» хирĕç бойкот тăвасси çинчен, çавăн пекех суйлавçăсен списокĕсене тĕрĕслеме уйăрнă комитетсенчен коммунистсене каялла чĕнсе илесси çинчен официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ. Либералсен партийĕ те çавăн пек решени пичетлесе кăларассине кĕтеççĕ. Çакăнпа пĕрлех регент патне, ют çĕршывсенчи дипломатиллĕ представительсемпе пичет представителĕсем патне халăхăн тĕрлĕ сийĕсемпе организацийĕсенчен, вăл шутра нумай министерствăсенчи служащисенчен правительство ĕçĕсене хирĕç протестсем пыраççĕ. Протестсене алă пуснă çынсем политикăллă ирĕклĕхе таврма, террора пĕтерме, оккупаци вăхăтĕнче пуйса юлнă спекулянтсемшĕн çеç усăллă пулса тăракан экономика политикине пăрахăçлама, Грецире представительсен правительствине туса хурса Ялтăра йышăннă решенисене пурнăçлама ыйтаççĕ.

Ĕнер Афины хулинче Вулгарис правительстви экономика тĕлĕшпе тăвакан ĕçсене хирĕç протестлесе лавкаçăсем забастовка тунă. Патры хулинче бакалей магазинĕсене 24 сехете хупса лартнă пулнă. Салоники хулинче пекарнĕсенчи рабочисем забастовка пуçласа янă.

ЛОНДОН, августăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Афины хулинчен çапла пĕлтерет: «Паян Грецин премьер-министрĕ Вулгарис адмирал хăй кабинечĕн составĕнче улшăнусем туса ирттернĕ. Шалти ĕçсемпе ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен тата тинĕс флочĕпе авиаци министрĕсен ĕçĕсене вăл хăй çине илнĕ».

Рейтер агентствин дипломатиллĕ обозревателĕ каланă тăрăх, Вулгарис адмирал урăхлатса çĕнетнĕ «служебнăй» правительствăн куçкĕретĕнех курăнакан уйрăмлăхĕ — премьер-министрăн влаçĕ пиçăкланни кăна пулса тăрать. Грецири политикăллă пурнăçăн тĕп ыйтăвĕсене татса пама хăтланса, Вулгарис адмирал тĕп министрсен ĕçĕсене хăйĕн аллине илнĕ.

АФИНЫ, августăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер премьер-министр Вулгарис радиопа сăмах тухса каланă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл правительствăн программине палăртнă. Çав программăн пĕрремĕш пунктĕнче каланă тăрăх, «декабрь уйăхĕнче пулнă восстанире тискер преступленисем тунăшăн айăплă çынсене наказани парасси правительствăн обязанноçĕ тата нацичи паллă тивĕçлĕхĕ пулса тăрать». Çак задачăна, тенĕ премьер-министр, эпĕ ертсе пыракан кивĕ правительство чылай енĕпе пурнăçа кĕртнĕ, çĕнĕ правительство ăна пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртсе çитермелле. Оккупантсемпе пĕрлешсе ĕçленĕ сутăнчăксене наказани парасси çинчен, çарпа государство аппаратĕнчен фашистсене тасатса кăларасси çинчен премьер-министр пĕр сăмах та каламан.

«Декабрь уйăхĕнче пулнă преступленисене» хутшăннă тесе хăшпĕр çынсене тавăрас шутпа хĕсĕрлениине тата «тĕрмери условисем калама çук йывăррине» Вулгарис йышăннă. Çакăнтах вăл «преступленисемшĕн амнисти пама çук», тенĕ. Юлашкинчен Вулгарис—çĕршыв интересĕсем ыйтаççĕ пулсан, унăн правительстви вырăнтан тухма, урăх правительствăна вырăн пама хатĕррине палăртса хăварнă.

ГАИТИ ТАТА ДОМИНИКАН РЕСПУБЛИКИН ПАРЛАМЕНЧĔСЕМ ПĔРЛЕШНĔ НАЦИСЕН УСТАВНЕ ЫРЛАНĂ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Гаити халăхĕн ассамблеи Пĕрлешнĕ нацисен уставне пĕр кăмăллă пулса ырланă.

НЬЮ-ЙОРК, августăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Доминикан республикин конгресĕ пĕр сасăллă пулса Пĕрлешнĕ нацисен уставне ырланă.

КОММОНУЭЛС ПАРТИЙĔН РУКОВОДСТВИ ПАРТИЕ САЛАТСА ЯРАССИ ÇИНЧЕН СӲТСЕ-ЯВНИ

ЛОНДОН, августăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Коммонуэлс партийĕн наци комитечĕн ларăвĕнче парти лидерĕсем Ричард Экленд тата Том Уинтрингем партие салатса яма кирли çинчен çине тăрсах тухса каланă.

Çĕнĕ парламентра Коммонуэлс партийĕ пĕр вырăн кăна илнĕ. Çав вăхăтрах 16 кандидат, вăл шутра Экленд хăй те, государствăна панă суйлав залогне çухатнă, мĕншĕн тесен хăйсен суйлав округĕсенче вĕсем мĕнпур сасăсен 8 пайĕнчен пĕр пайне те илме пултарайман.

Комитет йышăннă тăрăх сентябрь уйăхĕнче ятарласа конференци пухмалла, çав конференци партин малашнехи кунçулĕ çинчен решени йышăнмалла.

ПЕТЭНА СУД ТУНИ

ПАРИЖ, августăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Петэн судĕнче паян айăпланакана хӳтĕлекен Пайен тата Лемэр адвокатсем тухса каланă. Пайен хăйĕн сăмахĕнче Петэн 1914—18 çулсенчи вăрçă вăхăтĕнче «усăллă ĕçсем» туни çинчен каланă, анчах та Петэна айăпласа каланă пунктсем çинчен нимĕнех те каламан. Иккĕмĕш хӳтĕлекенĕн Лемэр адвокатăн сăмахĕ те çавăн пекех пулнă. Вăл заговор тунăшăн Петэна айăпламалла мар тесе ыйтнă.

Ыран хӳтĕлекен представителĕсен сăмахĕсене малалла итлеççĕ.

КĔСКЕН

* Хĕвеланăç Германире Бухенвальдри вилĕм лагерĕнче тискер ĕçсем тунă Берман Пистер обергруппенфюрера арестленĕ. Арестленĕ вăхăтра Пистер, Германи çарĕн офицер тумне тăхăннăскер, Баварири тыткăна лекнĕ çар çыннисен лагерĕнче пытанса пурăннă. Унпа пĕрле 18 çынна арестленĕ. Вĕсен пурин те суя документсем пулнă.

Тытса хупнисене асаплантарас ĕçе Пистер хăй пăхса тăнă, сăмахран, «усăсăр» текен тыткăна лекнĕ çынсен юнĕ ăшне наркăмăш янине пăхса тăнă.

ÇĔНĔ КĔНЕКЕСЕМ

«ВИÇĔ ДЕРЖАВĂН БЕРЛИНРИ КОНФЕРЕНЦИЙĔ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНИ»

Чăвашсен Государство издательстви «Виçĕ державăн Берлинри Конференцийĕ çинчен пĕлтернине» чăвашла тата вырăсла уйрăм кĕнекесем туса кăларчĕ. Чăвашла изданин тиражĕ—3000 экз., вырăслин—2000. Кашни кĕнеки 40 пус тăрать.

АЛЬМАНАХĂН ÇĔНĔ НОМЕРĔ

Чăваш Совет писателĕсен Союзĕ кăларакан «Тăван Атăл» альманахăн черетлĕ 21—22-мĕш номерĕ пичетленсе тухрĕ. Номерте: ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ М. А. Андреев çырнă «Чăваш республики 25 çул тултарчĕ» ятлă статья, А. Ĕçлĕхĕн «Çĕрпе кăвак тӳпе» пьеси, Л. Агаковăн «Вилĕмрен те вăйлăрах» повеçĕ, Ф. Уярăн «Пăлхав» ятлă историллĕ повеçĕн пуçламăшĕ, В. Давыдовăн «Чемен» ятлă поэми, И. Тукташ, С. Эльгер, В. Ахтубай сăввисем тата ыттисем те.

«ПĔЧĔК КАЛАВСЕМ»

«Книжка-малышка» серийĕпе Л. Н. Толстойăн «Пĕчĕк калавсем» ятлă кĕнеки пичетленсе тухрĕ. Сборнике «Сырла шăмми», «Филиппок», «Хĕрачапа кăмпасем» тата ытти калавсем те кĕнĕ.

Фельетон

„Та-а-шă пулать!“

Тĕнчери е çĕршыври пысăк ĕçсем пирки калаçа париччен, вырăнти хаçатсен çĕнĕ номерĕсемпе паллаштариччен, республикăри «хыпарсене париччен»,—пуринчен малтан, пуринчен малтан,—каçсерен шăп 7 сехет те 01 минутра хулари мĕн пур репродукторсенче хавасла та çĕклеӳллĕ сасă илтĕнсе каять:

— Кинотеатр çуртĕнче та-а-шă пулать! Джаз-оркестр... Руководителĕ — композитор... Пуçламăшĕ—9 сехетре!

Пауза. Диктор сывлăш çавăрать. Унтан:

— Филармони залĕнче та-а-шă пулать! Духовой оркестр калать. Руководителĕ—композитор... Пуçламăшĕ—10 сехетре!

Эсир площадьпе иртсе çӳретĕр. Унта виçĕ метрлă фанерăсем çине виçĕ сăрăллă шултăра саспаллисемпе çырнă виçĕ афиша:

— Кинотеатрта—августăн 8—9—10—12—13—14—15-мĕшĕсенче та-а-шă!

— Филармонире — та-а-шă!

— «Динамо» клубĕнче — та-а-шă!

Вĕресе тăнă пек çăра çулçăллă йывăç тĕмисен ешĕл-симĕс фонĕ çинче çав нумай сăрăпа çырнă афишăсем мĕн тери илемлĕн курăнса тăраççĕ! Мĕн тери илемлетеççĕ вĕсем хула сăнне!

Кинотеатр. Кассă умĕнче—шукăль тумланнă, хăва хулли пек яштака хĕрсемпе каччăсем кĕпĕрленсе тăраççĕ.

Акă кĕçех фойăре аккордеонăн ачаш та чуна кăтăклантаракан сасси илтĕнсе каять. Кассă патĕнчисем хыпаланма, билетсене черетсĕрех илме тытăнаççĕ. Çав вăхăтра кино-залра сеанс пырать пулсан, аккордеон чĕннипе, залран çиййĕнчех виç-тăватă мăшăр фойăне вăркăна-вăркăна тухаççĕ. Контролер нимĕн те тума пултараймасть.

Ташă пуçланчĕ! Аккордеон ачашшăн найкăшать, йĕс трубасем мăйлатаççĕ, ахăлтатаççĕ. «Хура-куçăм, савнă тусăм, сывпуллашма вăхăт çитет пуль...»

Ташă пуçланчĕ!

Квартал урлă çеç—филармони. Лере, кинотеатрта ташă хĕрсе çитнĕ тĕле, кунта тромбон мĕкĕрсе ярать, часах кларнетсем, флейтăсем, гобойсем—альтсем, дискантсем, бассем хутшăнаççĕ. Румба çемми мăшăрсене çăмăллăн транки-транки сиктерме тытăнать.

Филармони залĕ, фойэ пек мар, аслăрах та уçăрах. Кунта нимĕнле пукан-тенкел тавраш те çук. Кăçалхи çуркунне çеç лартнă кантăксене çапа-çапа çĕмĕрнĕ те, зал витĕр уçă çил варкăштарса вĕрет. Питĕ уçă, ташлама çăмăл. Акустика, резонанс вăйлă. Çĕмрĕк кантăксем витĕр хумханса тухакан кĕвĕсем хула çиййĕн, Атăл çиййĕн йăлăм патнелле çепĕççĕн ярăна-ярăна каяççĕ.

Аялта, филармони алăкĕнчен кĕнĕ-кĕменех, пурте паллакан сăра пички мăнаçлăн ларать. Унăн насусĕ пĕрехмай пĕр юрă: хăй-инк, хăй-инк, хăй-инк, тесе юрлать.

Филармони тата тепĕр тĕлĕшпе те кинотеатртан лайăхрах вырăнта ларать. Халиччен Чăвашсоюз пулнă çуртра (вăл филармонипе юнашарах) «Буфет» вырнаçнă. Унта ирхине 8 сехетрен пуçласа çĕрле 11—12 сехетчен «урнă ĕне сĕчĕпе» сутă тăваççĕ. Ташласа хĕрнĕ çамрăксем тепĕр ташă пуçланиччен кунта кĕрекĕре тухма пултараççĕ.

Ташă малалла кĕрлет. Анчах «урнă ĕне сĕчĕ» те хăйĕннех тăвать. Акă филармонин тепĕр кантăкĕ чанкăртатса сирпĕнсе каять. Такăшĕ сывлăша ытларах уçăлтарасшăн. Сывлăш! Ахаль мар çĕмĕрлет кантăк, çынсене сывлăш кирлĕ.

Ташă хумĕ çинче ярăнсан-ярăнсан тахăшĕн тата пуçĕ çаврăнма тытăнать, ăшĕ пăтранать. Акă иккĕмĕш хутри чӳречерен филармони картишнелле «урнă ĕне сĕчĕпе» хутăш темĕн те пĕр сирпĕнме тытăнать.

— Çитет!—тейĕ вулакан ку тĕлте.

Эпир те çаплах калаççăн, хисеплĕ вулаканăм!

Пирĕн хулара музыка коллективĕсем ытлашши нумаях мар пулсан та, юрăпа ташă ансамблĕ, духовой оркестр, джаз-оркестр, эстрада коллективĕсем пур. Анчах юрăпа ташă ансамблĕн сасси филармонин çĕмрĕк чӳречисенчен кăнтăрла, çынсем ĕçре чухне çеç илтĕнет. Вăл унта çаплах репетици тăвать. Юбилей кунĕсене шутламасан, ансамбль кăçал пĕр концерт та памарĕ. Духовой оркестр ташă кĕввисемсĕр пуçне, урăх пĕр пултĕ япала та калама пĕлмест.

Филармони директорĕ Лисков юлташ:

— Пирĕн финплан тултармалла... Концерта çӳремеççĕ, ташлама нумай çӳреççĕ, анчах ташăран та усси сахал, горфинотдел налог нумай илет,—тесе калаçать.—Тем тумалла?! — тет те вăл, хуйхине пусарма буфеталла кĕрсе каять.

Пуçпах ташша ярăнса кĕрсе кайнăшăн çамрăксене айăплама та çук. Ăçта каяççха вĕсен пушă вăхăтра? Площадьри виçĕ метрлă «ташă афишисем» хушшинче эпир кăçал çу касиччен пĕр афиша—Дмитриев циркач хăйĕн упине кăтартасси çинчен калакаскерне çеç курнăччĕ.

Ăçта эсир, культурăллă кану çинчен калаçакан тусăмсем, филармонин художествăллă, администрациллĕ, хĕрӳллĕ те пултаруллă руководителĕсем? Ăçта эсир, капельмейстерсем, хормейстерсем, танцмейстерсем тата... искусствăна ертсе пыракансем? Пĕр ташăпа кăна мар-çке телейлĕ пулмалла пирĕн çамрăксем!

Афанасий ЙĔП.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретариатăн — 4—26, пропаганда пайĕн — 2—89, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленность пайĕн — 3—97, ялхуçалăх пайĕн — 3—39, рабселькорсен пайĕн — 0—67, издательство конторин — 0—23.

НТ 00394 Типография №1, Управления полиграфпромышленно... СНК ЧАССР. Заказ №2, ф. б. 59 42 п. п. Тираж 16.000